2021-мĕш çулхи кăрлач уйăхĕн 14-мĕшĕнче
кăларнă 01№лĕ приказăн
1-мĕш хушăмĕ

# Сценарисен «Чăвашла уяв янратăр!» республика конкурсĕн положенийĕ

## Пĕтĕмĕшле калани

Сценарисен «Чăвашла уяв янратăр!» республика конкурсне (малалла – конкурс) Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политики министерствин хушма професси вĕренĕвĕн «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» бюджет учрежденийĕ (малалла – Вĕренӳ институчĕ) йĕркелесе пырать.

Вĕренӳ институчĕ йĕркелӳ комитетне тата жюри тăвать, комитетра кам тата миçен ĕçлессине конкурса йĕркелекенсем палăртаççĕ.

**Конкурс тĕллевĕсемпе задачисем:**

– вĕрентекенсен кулленхи ĕçне çăмăллатма çителĕклĕ чухлĕ чăвашла уяв сценарийĕ пуçтарасси;

– тăван чĕлхене, литературине тата тăван ен культурине аталантарас енпе творчествăллă ĕçлекен педагогсене тупса палăртасси, вĕсен паха опытне сарасси;

– педагогсем ачасен тавра курăмне, пуплев культурине аталантарма усă куракан çĕнĕ мелсемпе меслетсене тупса палăртасси.

**Конкурса хутшăнакансем:**

шкулчченхи вĕренӳ организацийĕсенче, пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсенче, хушма пĕлӳ паракан вĕренӳ организацийĕсенче, професси пĕлĕвĕ паракан вĕренӳ организацийĕсенче ĕçлекен педагогсем.

**Конкурс номинацийĕсем:**

- «Уяв сценарийĕ» («Сценарий праздника»);
- «Класс сехечĕн сценарийĕ» («Сценарий классного часа»);
- «Ача ашшĕ-амăшĕн пухăвĕн сценарийĕ» («Сценарий родительского собрания»);
- «Уроксем хыççăнхи мероприятин (экскурси, литература тĕпелĕ, ăс-хакăл вăййи т.ыт.) сценарийĕ» («Сценарий внеклассного мероприятия» (экскурсии, литературной гостиной, интеллектуальной игры и др.);
- «Спорт мероприятийĕн сценарийĕ» («Сценарий спортивного мероприятия»).

**Конкурса irttермелли йĕрке**

Конкурс кĕретсĕр (заочно) формăпа иртет.

Конкурс тӳлевлĕ. Пĕр ĕçшĕн 250 тенкĕ тӳлемелле. Пĕр ĕçĕн икĕ автортан ытларах пулмалла мар.

Педагог конкурса темиçе ĕç те тăратма пултарать. Кашни ĕçшĕн **уйрăмшарăн** тӳлемелле пулать.

Сценарисене **чăвашла** çырмалла, чăваш клавиатурин ятарлă сарăмĕпе (шрифчĕпе) усă курса пичетлемелле. Сарăм лартмалли программăна http://www.chrio.cap.ru/ сайтран «Наци вĕренĕвĕ» баннертан уçласа илме пулать.

Сценарисене Times New Roman шрифтпа, 12-мĕш размерпа наборламалла, ĕç калăпăшĕ 6 страницăран ытла пулмалла мар. Сценарире сăвă-юрăсен тулли текстне памалла, авторĕсене палăртмалла. Вăйă йĕркине туллин çырса кăтартмалла. Сăн тата ытти йышши ӳкерчĕксем **.jpg** форматпа, презентацисем **.ppt** форматра пулмалла. Видео формачĕсем анлă сарăлнисем пулсан лайăх. Видеоматериал вăрăмăшĕ 10 минутран иртмелле мар.

Конкурс ĕçĕ (сценари) титул листĕнчен пуçланмалла. Титула 1-мĕш хушăмра (приложенире) кăтартса панă йĕркепе тултармалла.

Конкурс материалĕсем унччен интернетра е урăх çĕрте **пичетленменнисем** пулмалла. Унчченхи конкурссенче малти вырăнсене йышăнман ĕçсене лайăхлатса тепре конкурса тăратма юрать.

Авторлăхĕ пирки шанчăксăрлăх çуратакан ĕçсене конкурса илмеççĕ; мĕнле те пулин вариантра плагиат пулсан – ĕçе конкурсăн кирек хăш тапхăрĕнче пăхса тухма чарăнаççĕ.

Конкурса тăратнă ĕçсене педагогсен чи лайăх опытне сарас тĕллевпе пичетлеме е сайта тăратма йĕркелӳ комиссийĕн ирĕк пур.

Конкурса хутшăнакан педагогăн https://forms.gle/uzjny5QFbRnWKQod9 ссылкăпа **2021-мĕш çулхи пуш (март) уйăхĕн 15-мĕшĕччен**

1) хăй хатĕрленĕ чăвашла ирттермелли мероприяти (уяв, заняти) сценарине (е мероприятисен сценарийĕсене) тата
2) квитанци ярса памалла (положенин 2-мĕш хушăмĕ).

**Хаклав критерийĕсем:**

– вĕренӳ ĕçĕн хальхи тĕллевĕсемпе задачисене тивĕçтерни;
– вĕренекенсен ӳсĕм тата пĕлӳ шайне тивĕçтерни, ачасен харпăр хăй аталанăвĕн уйрăмлăхĕсене шута илни;
– мероприятин хăйне евĕрлĕхĕ (ытти ĕçсенчен уйрăлса тăни, темăпа творчествăллă ĕçлени, професси ăсталăхĕ);
– çĕнĕ, тухăçлă технологисемпе усă курни;
– грамматика, пуплев, орфографи, пунктуаци нормисене çирĕп пăхăнни.

**Конкурса пĕтĕмлетни**

Конкурс пĕтĕмлетĕвне жюри положенире палăртнă хаклав критерийĕсене шута илсе тăвать. Пĕтĕмлетĕве протокола çыраççĕ. Ăна жюри председателĕ е ун çумĕ çирĕплетет.

Чи нумай балл пухнă педагог конкурс çĕнтерӳçи пулса тăрать.

Жюрин номинацисен ятне, йышне улăштарма ирĕк пур. Ку ирĕкпе усă курса йĕркелӳ комитечĕ тивĕçлĕ йышăну тăвать.

Çĕнтерӳçĕсене тата призёрсене дипломсем парса чысласçĕ. Конкурса ирттерекенсем конкурсантсем валли ятарлă парнесем палăртма пултараççĕ. Конкурса хутшăнакан кашни вĕрентекене сертификат (электрон формăпа) параççĕ.

Конкурс çинчен информацие Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн сайтне (http://chrio.cap.ru ) вырнаçтарма палăртнă.

**Çыхăну адресĕ**

Конкурса йĕркелекенсен адресĕ:

428001 Шупашкар хули, М. Горький проспекчĕ, 5-мĕш çурт, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ,

217-мĕш пӳлĕм (регион аталанăвĕн центрĕ).

Телефон 8(8352)45-99-96, 89278434582.

E-mail: chrio18@rchuv.ru; chrio6@cap.ru .

Положенин 1-мĕш хушăмĕ

Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерствин
хушма професси вĕренĕвĕн
«Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» бюджет учрежденийĕ

**СЦЕНАРИСЕН «ЧĂВАШЛА УЯВ ЯНРАТĂР!» РЕСПУБЛИКА КОНКУРСĔ**

НОМИНАЦИ

______________________________________________________________________________

ТЕМА

______________________________________________________________________________

Мероприятие _______ çулти ачасем валли хатĕрленĕ

Ĕç тĕллевĕ:

Сценарин авторĕ:

***Алексеева Алина Алексеевна***,
*Шупашкар хулин 12-мĕш вăтам шкулĕн*
*чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенĕ*

*телефон:*
*e-mail:*

ШУПАШКАР – 2021

Положенин 2-мĕш хушăмĕ

# Квитанци

| | |
|---|---|
| Извещение | ПАО СБЕРБАНК Форма №ПД-4 |
| | Минфин Чувашии (БУ ЧР ДПО"Чувашский республиканский институт образования" Минобразования Чувашии, л/с 20266Б00961) |
| | (наименование получателя платежа) |
| | ИНН 2129009500 КПП 213001001 03224643970000001500 |
| | (инн получателя платежа) (номер счёта получателя платежа) |
| | БИК 019706900 (ОТДЕЛЕНИЕ-НБ ЧУВАШСКАЯ РЕСПУБЛИКА БАНКА РОССИИ //УФК по Чувашской Республике г. Чебоксары) |
| | (наименование банка получателя платежа) |
| | Назначение: 87400000000000000130 874200 Республиканский конкурс сценариев «Чăвашла уяв янратăр!»; КБК: 87400000000000000130; ОКТМО: 97701000 |
| | (назначение платежа) |
| | Сумма: 250 руб. 00 коп. |
| | (сумма платежа) |
| | С условиями приёма указанной в платёжном документе суммы, в т.ч. с суммой взимаемой платы за услуги банка, ознакомлен и согласен. Подпись плательщика ____________________\ |
| Квитанция | ПАО СБЕРБАНК Форма №ПД-4 |
| | Минфин Чувашии (БУ ЧР ДПО"Чувашский республиканский институт образования" Минобразования Чувашии, л/с 20266Б00961) |
| | (наименование получателя платежа) |
| | ИНН 2129009500 КПП 213001001 03224643970000001500 |
| | (инн получателя платежа) (номер счёта получателя платежа) |
| | БИК 019706900 (ОТДЕЛЕНИЕ-НБ ЧУВАШСКАЯ РЕСПУБЛИКА БАНКА РОССИИ //УФК по Чувашской Республике г. Чебоксары) |
| | (наименование банка получателя платежа) |
| | Назначение: 87400000000000000130 874200 Республиканский конкурс сценариев «Чăвашла уяв янратăр!»; КБК: 87400000000000000130; ОКТМО: 97701000 |
| | (назначение платежа) |
| | Сумма: 250 руб. 00 коп. |
| | (сумма платежа) |
| | С условиями приёма указанной в платёжном документе суммы, в т.ч. с суммой взимаемой платы за услуги банка, ознакомлен и согласен. Подпись плательщика ____________________\ |

-----------------------------------------------------------------------------------------------------------